26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
27
ШАМАТКУН
47(6284) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1943 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешесси — ялти çамрăксен патриотла тивĕçĕ

Кăçал пирĕн хамăрăн çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли тата ытларах тырпул, çĕрулми пахча-çимĕç, аш-какай, техникăллă культурăсем туса памалла. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçлас тĕлĕшпе колхозлă ялăн ĕçсыннийĕсен, унти комсомолецсемпе çамрăксен пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Чăваш республикинчи комсомолецсемпе çамрăксем 1942-мĕш çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ çĕрте колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче хăйсен хисеплĕ вырăнне йышăнчĕç. Пĕлтĕр республикăри колхозсен уйхирĕсенче пиншер комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, шкулсенче вĕренекенсемпе пионерсем 145.000 ача ытла ĕçленĕ. Ял çамрăкĕсем ялхуçалăх ĕçĕсенче хăйсен пултарулăхĕпе ĕçченлĕхне тата организованноçне кăтартса панă. Вăрлăх сортлас, вырăнти удобренисене хатĕрлес, ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене пухас, ялхуçалăхĕнчи механизаторла кадрсене хатĕрлес ĕçсене активлăн хутшăннă.

Пĕлтĕр вăрлăхсене çураки валли хатĕрлес тĕлĕшпе ирттернĕ çирĕмкунлăхра республикăри çамрăксен вăйĕпе 177.916 центнер вăрлăх сортланă. 1942 çулхи çуракине хатĕрленнĕ май, çамрăксем уя 2.048.500 лав тислĕк кăларнă, 30.200 центнер торф, 6.180 центнер кĕл, 3.628 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвĕпе ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене 235.206 тенкĕлĕх пухнă. Колхозсенчи тата МТС-сенчи çамрăксем хăйсен вăйĕпе иртнĕ çураки валли 916 сеялкă, 7.318 плуг, 8.532 сÿре тата 782 хăмăт-ĕнерчĕксем юсаса хатĕрленĕ. Фронта кайнă юлташсем вырăнне тăнă 1.850 çамрăк жнейкăсемпе тата лобогрейкăсемпе тыр㠖вырнă. 922 çамрăк, фронта кайнă юлташсем вырăнне тăрса, трактористсемпе комбайнерсем пулса ĕçленĕ, 2.281 çамрăк колхозник тырăсене çавапа çулса вырнă.

Анчах республикăри кашни колхозпа машинно-тракторнăй станцинчех çамрăксем ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх хутшăнчĕç теме пултараймастпăр-ха. Пĕлтĕр вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçĕн чи ответлă тапхăрĕнче — çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра вăрлăхсем сортласа хатĕрлес, ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсем юсас ĕçрен аякра тăнă комсомолецсемпе çамрăксем те пулчĕç. Ялхуçалăх машинисен техникине çителĕклĕ вĕренсе алла илеймен, горючи ытлашши расходланă тата уборкăна тăкак туса ĕçленĕ çамрăк трактористсемпе комбайнерсем те пулчĕç. Хăшпĕр колхозсемпе МТС-сен çамрăкĕсем вăйлă тырпулшăн, техникăллă культурăсен тухăçлăхĕшĕн начар кĕрешрĕç.

Кăçал вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш ялхуçалăх çулĕнче, иртнĕ çулхи йăнăшсемпе çитменлĕхсене урăх тумалла мар. Кашни колхозра, МТС-ра 1943 çулхи çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе ăнăçлăн ирттерес ĕçре комсомолецсемпе çамрăксен боевой организаторсем пулса тăмалла.

«Пирĕн пĕрремĕш тата тĕп задача — тырпул тухăçлăхне ÿстерессин, тырпул, çĕрулми, пахча-çимĕç ытларах туса илесси. Вĕсем пирĕн çĕршыва валли самолетсем, танксем, тупăсем, боеприпассем пекех кирлĕ. Тырпулшăн, пахча-çимĕçшĕн, çĕрулмишĕн кĕрешни вăл—нимĕçсене çĕнтерессишĕн кĕрешниех пулать, — тесе çыраççĕ Мускав облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем хăйсен çырăвĕнче.— **Çуракине кăтартуллăн хатĕрленесси, çурхи акана вăхăтра та пысăк пахалăхпа ирттересси—çакă халь пирĕн питех те кирлĕ патриотла ĕç».**

Мускав облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем пĕтĕм ялти çамрăксем патне, колхозсенчи, МТС-сенчи комсомолецсемпе комсомолкăсем патне çырнă çырăва ЦК ВЛКСМ ырласа комсомол организацийĕсене çуракине хатĕрленес тата çуракине ирттерес тĕлĕшпе çав çырура палăртнă ĕçсене тĕп никĕсе хума сĕннĕ.

Комсомолăн республикăри чылай организацийĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен çуракине хатĕрленес ĕçре Красноармейски районри «Янмурзино» колхозри комсомолецсемпе çамрăксен опычĕпе усă курса ĕçлемелле. Вĕсем колхоза çуракине хатĕрленме активлăн пулăшнă. Колхоза агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене пурнăçа кĕртмелли ĕç планне туса панă. Хăйсен вăйĕпе уя 500 лав тислĕк кăларнă, 76 центнер кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, ялхуçалăх машинисене юсаса тирпейлесе лартнă, вăрлăх сортлас ĕçе те активлăн хутшăннă. Комсомолăн колхозри организацин секретарĕ С. Ильин юлташ колхоз председателĕн активлă помощникĕ. Ана колхозниксем те хисеплеççĕ. Комсомолăн Ишлей районĕнчи «Красный танк» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ А. Сидоров) пуçарнипе унти çамрăксем колхоза çуракине хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе воскресниксем ирттернĕ. Пĕр воскресникре çамрăксем 26 гектар çинче юр тытнă, 12 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 16 центнер кĕл пухнă. Комсомолăн Комсомольски районри «Красный Октябрь», «Трактор», «Двигатель революции» колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем тата унти комсомолецсем 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсенче малта пынă, вĕсем çитес çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлеççĕ.

Анчах çуракине хатĕрленес ĕçе комсомолецсемпе çамрăксем пурте тивĕçлипе хутшăнмаççĕ-ха. Сăмахран, Комсомольски районри «Янга Турмыш», «Культура» колхозсенчи, Красноармейски районри «Большевик», «Исаково» тата Войков ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем çуракине хатĕрленес ĕçĕн тулашĕнче тăраççĕха. Калинино районĕнчи Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман, вĕсенчен хăшпĕрисем халĕ те юр айĕнчех лараççĕ. Плугсемпе сÿресен туртисем çителĕклĕ мар. Вăрлăх уйăрса çитермен. Комсомолецсем вара çакна асăрхамаççĕ.

Ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарьне уйхир ĕçĕсем валли хатĕрленĕ çĕрте, вăрлăх, туртăм вăйне çуракине хатĕрленĕ çĕрте, агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене пурнăçланă çĕрте комсомолецсемпе çамрăксен тăрăшса ĕçлемелле.

Комсомолăн ялти организацийĕсене колхозри ĕçсен мĕнпур ыйтăвĕсене сÿтсе-явма ирĕк панă. Колхозра вăрлăх хатĕрлесси, ялхуçалăх машинисене юсасси, тислĕк тăкасси, т. ыт. те сÿрĕккĕн пырать пулсан, колхоз председателĕсенчен çав çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме ыйтмалла, вĕсене çав ĕçре пулăшмалла.

Çитес çураки колхозсемпе МТС-сен работникĕсенчен, комсомолецсемпе комсомолкăсенчен организованноçа ÿстерме ыйтать. Ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, вырăнти рессурсемпе, материалсемпе тĕрĕс усă курмалла.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Колхозсенчи, совхозсенчи, МТС-сенчи комсомолецсемпе çамрăксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлемелле.

Рязань облаçĕнчи Рыбановски МТС-ри хĕрарăм трактористкăсен Дарья Гармаш ертсе пыракан бригади 1943 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме хĕрарăм-трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилеме чĕнсе каларĕ. Çамрăк трактористкăсем, Дарья Гармаш бригадин примерне йышăнса илсе, социализмлă ăмăртăва хутшăнăр!

ВЛКСМ райкомĕсен, МТС политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсен ялти комсомолецсемпе çамрăксене çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме мобилизацилемелле.

Военнăй налог укçине срокчен парса татаççĕ

ИШЛЕЙ. Тăрăн ялсоветĕнчи налог агенчĕ Данилова юлташ хăйĕн ĕçне ялсовет активĕпе куллен çирĕп çыхăнса туса пырать. Государствăна халăхран укçа-тенкĕ вăхăтра пухса парас ĕçе вăл агитациллĕ-ăнлантаруллă ĕçпе çыхăнтарать. Ку вăл колхозниксен фронта лайăхрах пулăшас кăмăл-шухăшне çĕклет, çĕнтерÿ тăвассишĕн ырми канми ĕçлеме хавхалантарать.

Тăрăн ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен парса татаççĕ. Паянхи куна ялсоветри ĕçсыннисем военнăй налог укçине 60 процент тÿлесе татнă. «Çĕнĕ пурнăç» колхозра чылай çемьесем военнăй налог укçине пĕтĕмĕшпех парса татнă.

М. Галкина.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Февралĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи енеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Февралĕн 24-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсем тата грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, тăшман артиллерийĕн 10 батарейине тата минометсен 5 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, тăшманăн тĕреклетнĕ пунктне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли ытла выртса юлнă. 13 пулемет тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, вĕсемшĕн пынă çапăçусенче тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ. Нимĕçсен 5 танкне тата темиçе орудийĕпе пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краматорскаяран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски часть нимĕçсен 2 ротăна çити пехотине пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 30 салтакне тыткăна илнĕ. Пирĕн тепĕр чаçăн боецĕсем, Гитлеровецсен контратакисене сирсе пырса, нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ тата тăшманăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ. 4 противотанковăй оруди, 3 миномет тата батальонри медпункта тытса илнĕ. Пирĕн летчиксем темиçе хутчен тăшман аэродромĕсене тапăнса çĕр çинче нимĕçсен 17 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсем Н-ски чаçа атакăлама хăтланнă. Пирĕн боецсем хирĕç пырса çапса противника каялла тартнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерĕн вилли ытла тата 300 аманнă салтакĕпе офицерĕ выртса юлнă.

* * *

Краснодартан хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем малалла тапăнса пырса Мингрельская станцине çавăрса илнĕ. Тăшманăн унти гарнизонĕ хăйĕн хĕçпăшалне пăрахма килĕшмен. Совет войскисем вара штурмласа Мингрельская станцине тытса илнĕ те нимĕçсен çăмăл пехотин унта вырнаçнă дивизийĕн 2 батальонне вĕлерсе пĕтернĕ. 8 оруди, 70 пулемет, япаласен, продовольстви темиçе складне тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Нимĕç гарнизонĕн юлашкийĕсене— 200 çынна тыткăна илнĕ. Мингрельскаяран хĕвеланăçнерехре кĕрешекен гитлеровецсем çав çавăрса илнĕ гарнизона пулăшу пама хăтланнă. Пирĕн подразделенисем вирлĕн атакăласа нимĕçсене каялла сирсе янă. Совет летчикĕсем нимĕçсен 4 транспортнăй самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ шоссе çулĕпе иртсе пыракан нимĕçсен колоннине засадăран атакăланă. Хăраса ÿкнĕ гитлеровецсем шоссе çулĕ çинче 70 вилĕ пăрахса хăварса тарса пĕтнĕ. Партизансем 5 пулемет, 60 винтовка, боеприпассем тата продовольстви турттарса пыракан 12 лав тытса илнĕ. Çав отрядри партизансен ушкăнĕ халăх пурăнакан пĕр пунктра нимĕçсен 2 орудине, темиçе винтовка тата 5 пин патрон тытса илнĕ.

* * *

Белорусси ССР-ĕнчи Витебск облаçĕнчен нимĕçсен фашистла ирсĕрсем тискер ĕç туни çинчен хыпар илнĕ. Оккупантсем пур ялсене те тустараççĕ, унта пурăнакан мирлĕ совет халăхне пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтереççĕ. Январь уйăхĕнче гитлерла палачсем пĕр Полоцк районĕнче кăна мирлĕ халăхран 546 çынна персе вĕлернĕ. Персе вĕлернисем шутĕнче старик Васильев, Сосношь ялĕнчи колхозница Евдокия Стернева, колхозник Иван Матюшенко тата ыттисем те пур.

* * *

Франци патриочĕсем нимĕç пусмăрçисемпе вăйларах кĕрешме тытăнаççĕ. Лион таврашĕнче ирĕклĕ стрелоксен отрячĕ нимĕçсен автоколоннине тапăннă. Патриотсем 13 гитлеровеца вĕлернĕ тата зенитнăй орудисем валли хатĕрленĕ приборсемпе запаслă чаçсене турттарса пыракан 6 автомашинăна çунтарса янă. Реймс—Ретель чугунçул линийĕ çинче ирĕклĕ стрелоксем нимĕçсен боеприпассемпе хĕçпăшалсем турттарса пыракан эшелонне крушени тунă. Парижра нимĕçсен офицерĕсем апатланнă ресторана вăйлă çĕмĕрекен бомба пăрахнă. 11 гитлеровеца вĕлернĕ тата амантнă.

Февралĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Февралĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи енеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре Н-ски часть, хаяррăн çапăçса, нимĕç пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн разведка тăвакан отряд çĕрле тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та темиçе дзота сирпĕнтерсе янă тата 40 гитлеровеца çити вĕлернĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем, сасартăк пырса çапса, вăйлăн тĕреклетнĕ халăх пурăнакан пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 виллине çити выртса юлнă. Темиçе оруди, минометсем тата минăсемпе гранатăсен складне тытса илнĕ.

* * *

Краматорскаяран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, тăшманăн мотопехотипе танкĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Н-ски часть гитлеровецсен йышлă контратакисене сирсе янă, нимĕç пехотине пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 26 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра нимĕç автоматчикĕсен ушкăнне, пирĕн чаçсен тылне кĕрсе кайма хăтланнăскере, çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илсе, пирĕн боецсем 6 оруди, 18 пулемет, 4 противотанковăй пăшал, тырă складне тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çăмăллăн куçакан отряд тăшманăн колоннине çапса аркатнă. Нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре Н-ски соединенин чаçĕсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем темиçе участокра контратакăсем тунă, çав контратакăсене противника пысăк çухатусем тÿстерсе сирсе янă. Пĕр участокра кăна 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем тăшмана халăх пурăнакан пунктран хĕссе кăларнă, 8 противотанковăй оруди тата боеприпассем тиенĕ 5 автомашина тытса илнĕ.

Венгерецсен 67 салтакĕ хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Вĕсем хăйсемпе пĕрле 5 пулемет тата 9 винтовка илсе пынă.

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Çĕрле Н-ски соединенин чаçĕсем татăклăн атакăласа Ангелинская станцине тытса илнĕ. Тăшманăн гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Малалла ăнăçу туса пырса, пирĕн боецсем Старониже-Стеблиевская ятлă район центрне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Урамсенче çĕрĕпех çапăçу пынă. Ирпеле пирĕн чаçсем Старониже-Стеблиевская ялне нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Пирĕннисем трофейăсем нумай тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшманăн тылĕнче ăнăçлăн çĕмĕрсе çÿренĕ. Партизансем нимĕçсен 240 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, чугунçулсене темиçе тĕлте сирпĕнтерсе янă, телеграфпа телефон линине 6 километр тăршшĕ касса илнĕ. Тепĕр отрядри партизансем нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, салтаксем ларса пыракан 2 вагон тата автомашинăсем тиенĕ 3 платформа çĕмĕрелнĕ, 50 гитлеровеца вĕлернĕ е амантнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Могилев облаçĕнчи Констюковичски районри нумай ялсенче çынсене вĕлерсе çÿренĕ. Нимĕçсен карательнăй отрячĕсем пĕр ялтан тепĕр яла пырса вĕсене ним юлмичченех çунтарса янă. Фашистла пуçкасакансем пĕр çынна та чĕррĕн хăварман, пурне те вĕлерсе тухнă. Гитлерла çынçиенсем мирлĕ совет çыннисене 450 çынна чĕрĕллех çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Служба обязанноçĕсене туса пынă вăхăтра вилнĕ Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕн, авиаци генерал-лейтенанчĕн Григорий Пантелеевич Кравченкăн ашшĕ-амăшне пĕр вăхăтлăх пособи тата персональнăй пенси памалла тăвасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ пулса тăракан авиаци генерал-лейтенанчĕн Григорий Пантелеевич Кравченкăн ашшĕ-амĕшне—ашшĕне, Пантелей Никитич Кравченкăна тата амăшне—Мария Михайловна Кравченкăна 25 пин тенкĕ пĕр вăхăтлăх пособи памалла тунă.

2. Унăн ашшĕне Пантелей Никитич Кравченкăна, амăшне, Мария Михайловна Кравченкăна ĕмĕрлĕхех уйăхне 500-шер тенкĕ персональнăй пенси парса тăмалла тунă.

3. Кравченко юлташа пытарассине государство шучĕ çине илнĕ.

КОМСОМОЛЕЦСЕМ КĔНЕКЕСЕМ ПУХАÇÇĔ

ÇАНАШ. Вăтакас Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан тата «Париж Коммуни» колхозсенчи комсомолецсем Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли илемлĕ литература кĕнекисем пухаççĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем пурĕ 18 кĕнеке пухнă. Комсорг К. Седова Чернышевскин «Что делать», Щедринăн «Избранные произведения» ятлă кĕнекисене тата «В боях за родину», «Эскадрон за мной» ятлă кĕнекесем пачĕ. Комсомолец С. Артемьев пурĕ 21 тенкĕлĕх илемлĕ литература произведенийĕсем пачĕ.

Т. Турхан.

Премьер-министр Сталина, Оборона Халăх Комиссарне

МУСКАВ

Паттăр Хĕрлĕ Çар пĕрлехи тăшмана çавтери вирлĕ пырса çапнисем пусмăра лекнĕ пур халăхсене те, вăл шутрах асапланакан, анчах парăнман Югослави халăхне те, ирĕке кăларса çĕклентерес куна çывхартать.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă майпа эпĕ Сире, Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандующине, Югославин хĕçпăшаллă вăйĕсен ячĕпе, çавăн пекех хам ятпа та çавтери савăнса чĕререн тав тăватăп.

ИОВАНОВИЧ,
Югослави премьер министрĕ.

ЛОНДОН, 1943 çулти февралĕн 22-мĕшĕ.

Иованович господина, Югослави премьер-министрне

ЛОНДОН

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа тата хамăрăн пĕрлехи тăшмана хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе Совет войскисем тунă çитĕнÿсен ячĕпе Эсир мана саламланăшăн эпĕ тав тунине йышăнма ыйтатăп.

И. СТАЛИН.

Мускав, Кремль,
февралĕн 24-мĕшĕ 1943 ç.

СТАЛИН юлташăн приказне сÿтсе-явнă хыççăн

ШАХАСАН. Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказĕ районри ĕçсыннисем хушшинче çĕнĕ çĕкленÿ пуçарчĕ. Анат Сурăмри «Красное Сормово» колхоз членĕсем приказа сÿтсе-явнă хыççăн çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухас тĕлĕшпе çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Кăçал вĕсем гектартан 20 центнертан кая мар тырă туса илессишĕн вăйлă кĕрешеççĕ. Колхоз çуракине тухма хатĕр. Вăрлăхсене тасатса, сортласа çитернĕ. Пурĕ 422 центнер вăрлăх хатĕрленĕ. Вĕсен шăтас пахалăхĕ 95—99 процент шутланать. Уя 2.119 лав тислĕк кăларнă. 112 центнер кĕл, 44 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 29 центнер фекали, пĕр тонна фосфорит сăнăхĕ хатĕрлесе хунă. 20 плуг, 25 сÿре, 4 сеялка акана тухма хатĕр. Вĕсене кĕркуннех юсаса хатĕрленĕ. Лаша кÿлмелли хатĕрсем çителĕклĕ. Çĕнĕрен икĕ хăмăт тутарнă, 25 тилхепе, 37 урхалăх явса хатĕрленĕ, ака пăявĕсене сăнчăртан тунă.

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказне сÿтсе-явнă хыççăн колхозниксем татах та тухăçларах ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем çураки ĕçне 7 кун хушшинче вĕçлеме сăмах пачĕç. Агротехникăна вĕренме агрокружок организацилерĕç. Колхозниксем фронта пулăшассине татах та вăйлăнрах туса пыма сăмах пачĕç.

Н. Матвеев,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа хатĕрленĕ киножурнал

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа çĕршыв экранĕсем валли 11—12 номерлĕ çĕнĕ кино-журнал кăларнă. Хĕрлĕ Çарăн иртнĕ паттăр кунĕсенчи эпизодсене, сăмахран, 1918-мĕш çулта нимĕç оккупанчĕсене Украинăран хăваласа кăларнине кăтартнă.

Журналра Совинформбюро юлашки сехетре пĕлтернĕ тăрăх тунă кадрсем, 1942—1943-мĕш çулта Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пыни çинчен, отечественнăй аслă вăрçăн паллă полководецĕсем-геройсем çинчен, нимрен хăрами партизансем çинчен, совет воинĕн патриотизмĕ çинчен калакан кадрсем пур. (ТАСС).

Значоксен нормисене параççĕ

КÿКЕÇ. Платкари пуçламĕш шкулти 49 вĕренекен БГСО значокĕн нормисене пачĕç. Халĕ вĕсем ПВХО значокĕн нормисене вĕренеççĕ.

Н. Мышкин.

Вăрман хатĕрлес ĕçе кашни колхозăн активлăн хутшăнмалла

ШĂХАСАН. („Чăваш Коммуни" корр.). Шĕкĕрти „Новый путь", Анат Вăрманъялти „Сосновка" колхозсем вутă хатĕрлес тĕлĕшпе плана ирттерсе тултарнă. Çавăн пекех Çĕнĕ Чалкасси ялсоветне кĕрекен „Новая жизнь" колхоз та ку тĕлĕшпе аван ĕçлет. Унти А. Назаров. И. Слесарев колхозниксем кунне 2,5 кубометр вутă касса хатĕрлес вырăнне 3—3,5-шер кубометр хатĕрлеççĕ. Хирти Тукайри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Н. Михайлов 40 кун хушшинче икĕ уйăхри задание ирттерсе пурнăçланă. Вăл кулленех вăтам шутпа 3,3-шер кубометр вутă касса хатĕрленĕ.

Вутă хатĕрлес тата турттарас ĕçре Атнашри Киров ячĕпе тăракан, „Ямурза" колхозсем те начар мар ĕçлеççĕ.

Анчах, районĕпе илсен, чугунçул валли вутă хатĕрлесе турттарасси çителĕксĕр пулса пырать-ха. Районри чылай колхозсем ĕç вăйĕ тата туртăм вăйĕ çителĕклĕ таран уйăрса памаççĕ. „III Интернационал", „Борец", „Олешево", „Березовка" колхозсем вăрман ĕçĕнче юлса пыраççĕ. Вĕсем вăрмана ĕçпе туртăм вăйне çителĕксĕр янă. Çавна пула район чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçре юлса пырать: вутă касса хатĕрлемелли плана 68 процент, турттармалли плана 56 процент çеç пурнăçланă.

В. Вĕселов.

УЙĂП МИШШИ

Хаярлăх çурални

Халь пирĕнтен çирĕпрехри, тăванăм,
Çак тĕнчере кам та пулин пур-ши?
Арк. Эсхель.

Эп ишĕлен хуласем витĕр тухрăм.
Вутра çунатчĕç эп иртнĕ ялсем.
Хураччĕ пĕлĕт. Çухрăм хыççăн çухрăм
Тапăнса килчĕç урнă шаккалсем.

Эп каçрăм вĕçхĕррисĕр хирсем урлă.
Ылттăн хумсем çӳретчĕç вĕсенче—
Танксем тĕшĕрсе тухнă. Мĕн пек пурлăх
Таптанчĕ, çунчĕ нимĕç айĕнче!

Çӳлте çăхан кĕтĕвĕн явăнатчĕç
Тискер хура хĕреслĕ «Юнкерссем».
Ял-хуласем çине бомба тăкатчĕç,
Айăпсăр çынсене вилĕм кӳрсе.

Епле тӳссе, епле чĕре ыратмĕ,
Епле ылханмăн çав тискерсене!
Паян кунччен чĕре кӳтсе тăрать ман:
Эп курнă Днепрогэс ишĕлнине.

Ача-пăча виллисене эп курнă,
Амăшĕсен типейнĕччĕ куççуль.
Ахальтен мар ĕнтĕ çӳçсем ман шурнă,
Чĕрем пиçсе хытнă — пулнă вут чуль.

Ешĕл хирсем ман куçумра хуралчĕç.
Чыссăр нимĕç ирсĕрлĕхне курсан.
Ман чĕрере хаяр çилĕ çуралчĕ,
Хул çурăма иксĕлми вăй парса.

Юнлă çапăçусем витĕр эп тухрăм.
Чĕррĕн ӗртместчĕç нимĕç-усалсем.
Эп чĕремре халăх хаярне пухрăм.
Çапăçура хăват илчĕç алсем.

Вут-тăвăл пек хăруш халăх хаярĕ.
Вутлă хĕç пек çивĕч халăх çилли.
Хăй юнĕпе чыхланчĕ нимĕç çарĕ,
Час ак чыхланĕ Гитлер—чунилли!

Кĕл пулнă килшĕн, ишнĕ хуласемшĕн,
Çуннă ялсемшĕн пулмĕ каçару.
Мăшкăл-асапшăн, вилнĕ ачасемшĕн,
Куççульшĕн, юншăн — юнлă тавăру!

Çĕр кисренсе тăрать ак: Хĕрлĕ Арми
Хăватлăн ăнтăлать Анăçалла.
Вăл пĕр юнĕçене чĕррĕн хăвармĕ,
Çĕршыва вĕсенчен тасатмалла!

Çав вăхăт çитрĕ! Эпĕр кĕтнĕ, шаннă
Вăл çитессе! Çĕнӳ кĕтет пире!
Халь пирĕнтен те хаярри, тăванăм,
Кам та пулин пур-ши çак тĕнчере?

1942 — 1943 ç. ç.

ЮЛАШКИ ПОЧТĂРАН

„ХĔСКĔЧПЕ"

Комсомольски районри „Октябрь ялавĕ" хаçат (ответлă редакторĕ В. А. Андреев) хăйĕн 13-мĕшпе 14-мĕш номерĕсенче çакăн пек заголовокпа кĕске те витĕмлĕ материалсем пичетленĕ. Унта вăл ситменлĕхсене пĕтерес ĕçре тĕрлĕ сăлтавсем шырама хăнăхнă е вăрçă йывăрлăхĕпе витĕнсе пурăнма вĕреннĕ руководительсемпе работниксене çивĕччĕн критиклен̆ĕ. Акă вĕсенчен хăшпĕрисем:

Сезонлă учреждени

— Кĕрсе анчах курасчĕ район центрĕнчи клуба.

— Халĕ, хĕллехи вăхăтра, кĕрсе пулмĕ çав, çăва тухсан мĕнле пулĕ.

„Красное Сормово" колхозра

— Пур çĕре те тимлесех пăхрăм ĕнтĕ, анчах кантăр çурăмне кураймарăм.

— Ара, кантăр çурăмĕсене кĕркуннех шыва хутса хăварнă-çке, халĕ ăна çурхи шывпа юхса каясса кĕтеççĕ.

Комсомольскри вăтам шкулта

— Директор юлташ, мĕншĕн сирĕн шкулта тасамарлăх?

— Тĕлĕнмелле ыйту. Тасамарлăха хирĕç пирĕн мар, райздрав отдел работникĕсен кĕрешмелле.

Çутă пулăшнипе

(Маскировка çуккине пула)

— Эсĕ хăçан тупрăн кăнтăрла ӳкерсе хăварнă япалуна?

— Çĕрле, урамра, район центрĕнчи учрежденисен краççын лампи çуттипе.

Çуркуннехи маршрут

— Тепĕр икĕ уйăхран Кайнлык ялсоветне Шăхран урлă кайма пулать-ши?

— Райдоротделпа Шăхран ялсовечĕ çитес кунсенче кĕпере юсаттармасан Кайнлык ялсоветне çак маршрутпа асапланса çитме пулĕ: «Комсомольски — Хирти Мăнтăр — Кайнлык».

Ют çĕршывсенче

Лондонра „СССР тата Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни" ячĕпе выставка уçнă

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра „СССР тата Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни" ячĕпе выставка уçалнă. Нумай йышши фотографисемпе ытти экспонатсем Совет Союзĕ пурăнса ирттернĕ çула кăтартаççĕ, хуçалăхпа культура тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсене тата çĕршыв сыхлăхне ӳстерни̇не кăтартса параççĕ. Выставкăра СССР посолĕ Майский юлташ сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çакна паллă тунă: виçĕ уйăх хушшинче совет войскисем тунă наступление пула нимĕçсем иртнĕ çулла вилнисенчен те ытларах çухатусем тӳсрĕç. Германи командованийĕ çавна пула хĕвеланăçĕнчен тата Германирен ССР Союзне хирĕç фронта 30 дивизи çĕнĕрен янă. Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнӳсем вăл иртнĕ вăхăтпа танаштарсан чылай вăйланнипе пулнă.

Хĕрлĕ Çар çавăн пек вирлĕ аталанни вăл пĕтĕмпех унăн Верховный Главнокомандующийĕ Сталинран килет. Вăл хурçă пек çирĕп пулса Хĕрлĕ Çара пĕр чарăнмасăр тĕреклетсе пырса, ăна хальхи вăрçăн задачисене татса паракан çар туса хучĕ. Хĕрлĕ Çарăн стратегийĕпе унăн çĕнтерӳĕсем Сталин ячĕпе уйăрălми çыхăнса тăраççĕ. Юлашки уйăхсенчи событисем,— тенĕ Майский,—ССР Союзĕнче çав тери пысăк хавхалану кӳчĕç тата этемлĕхе çĕнĕ шанчăк пачĕç. Анчах Германи ĕнтĕ пĕтсе çитет тесе шутлани йăнăш пулнă пулĕччĕ.

Хĕрлĕ Çар çитĕнĕвĕсем пысăк, тенĕ Майский, анчах вĕсем совет çĕршывне хакла ӳкеççĕ. СССР тӳсекен йывăрлăха епле те пулин урăх çĕршыв тӳсме пултарнă пулĕччĕ-ши? „Çавăнпа та ĕнтĕ, паллах, Касабланкăра йышăннă вăрçă решенийĕсене хăвăртрах пурнăçлассине СССР кĕтсех тăрать. Англипе Америка вăйĕсем фашистла Германие мĕн тери хăвăртрах вăйлăн пыра-пыра çапĕç, Германие эпир унăн хапхине икĕ енчен—хĕвелтухăçпе хĕвеланăç енчен — икĕ мăлатукпа çапса тăрсан, çавăн чухлĕ хăвăртрах çĕнтерĕпĕр, çавăн чухлĕ жертвăсем те сахалтарах пулĕç. Хĕвелтухăçĕнче пырса çапнинчен сывлăш çавăрса илме парас мар тăшмана. 1943 çул фашистла Германипе унăн союзникĕсемшĕн татăклă поражени тӳсмелли çул пулса тăтăр!".

Лордсен палатинче Бивербрук тухса калани

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: авиаци промышленноçĕн министрĕ пулнă лорд Бивербрук лордсен палатинче Европăра иккĕмĕш фронта халех уçма кирли çинчен сăмах тухса каланă. Вăл калана тăрăх, союзниксен нимĕçсене халех, вĕсем хăйсен вăйĕсене тепĕр хут йĕркеличчен, пырса сапмалла.

Африкăри кампани паллă выран йышăнать, вăл Европăна тапăнмалли база пулса тăрать, Англин лайăх майсем урăххисем те пур. Англирен тапăнма, тенĕ Бивербрук, снабжени енĕпе Германирен япăх мар çулсем пулаççĕ, пирĕн тата авиаци тĕлĕшĕпе те пысăк майсем пулаççĕ.

Вырăссен иккĕмĕш наступленийĕ пирки Бивербрук çапла каланă: вăл наступлени эпир кĕтсе тăнинчен тем тери ăнăçлăрах пулчĕ, анчах ун çине çеç шанса ларма пултараймастпăр эпир. Пирĕн умра пысăк хăрушлăхсем тăраççĕ.

Тĕнĕл держависен пропагандисчĕсем пире каллех коммунизмпа хăратма пăхаççĕ, анчах вырăссен строййĕ пире нимĕн чухлĕ те интереслентермест. Икĕ çĕршыв хушшинче тачă тата туслă çыхăну пулмалла. „Эпĕ коммунист мар,— тенĕ Бивербрук,—анчах коммунизм историре пулман пек ăнăçлă икĕ наступлени тунине ыттисенчен малтан йышăнтăм".

Вырăссем территори тĕлĕшпе тата материальнăй тĕлĕшрен тӳснĕ çухатусене аса илтернĕ Бивербрук. Вырăссен наступленийĕ хыççăн нимĕçсене сывласа илме памасăр пирĕн халех тăшмана çапмалла. Çавна пирĕн питĕ хăвăрт тумалла. Вăхăт тени паллă выран йышăннине шута илсе, тенĕ Бивербрук, пирĕн çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен те, Вăтаçĕр тинĕс енчен те Европăна çĕмĕрсе кĕмелле. Çурçĕр-хĕвеланăç Германи çине тапăнни ăнăçлă çул уçнă пулĕччĕ, подводнăй лодкăсен Франццири базипе усă курма памĕччĕ, Африкăпа çыхăнса тăракан коммуникацисене кĕскетнĕ пулĕччĕ. Анчах пурте вăхăтран килет. Халăхăн кунçулне сехете суйласа илни татса пама пултарать.

США вице-президенчĕ Уоллес тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Георг Вашингтон çуралнă куна уявланă май США вице-президенчĕ Уоллес сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: „Çурçĕр Африкăри Америка салтакĕсем вăрçă ĕçĕсемпе питĕ кăмăлсăрланаççĕ. Нацистсене Африкăран, Италирен тата Берлинран хăваласа кăлармасăр та лăпланас çук вĕсем. Пĕлекен çынсем,—тенĕ Уоллес,— çапла шутлаççĕ: США-па Англи халăхĕсем пĕрле, вырăссем пек, вăйлăн çине тăрас пулсан, 1943 çултах Германие çĕнтерме пулать. Анчах вырăссем пирĕнсĕрех, малашне эпир пулăшса тăмасăрах çĕнтерĕç тесе шутлакан çынсем политикăна туса пырас пулсан, вара 1943 çулта çĕнтерме пулмасть.

1917 çулхи октябрьте,—тенĕ Уоллес,—государствăна ертсе пыракан деятельсенчен пĕри,—халĕ вăл оппозици ретĕнче тăрать,—пире çапла тума хушатчĕ: Европăри хамăрăн союзниксем патне продовольствипе хĕçпăшал ярса тăнипе те çитĕ, Европăна салтаксем ярса хамăрăн пурнăçа пăсас мар. Унăн канашне эпир итленĕ пулсан, 1918 çулхи çу кунĕсенче Германи çĕнтерме пултарнă пулĕччĕ. Çав этемех паян каллех çавăн пек канаш парать. Хамăра мĕн чухлĕ çар кирлине шута илмесĕрех вăл пирĕн çар хисепне чакарасшăн. Американецсенчен нумайĕшĕ, тенĕ Уоллес, вăл шухăша йышăнмаççĕ. 1944 çулта çĕнтерме 1943 çулхинчен темиçе хут ытларах çине тăмалла пулнине вĕсем пĕлсе тăраççĕ. Ыра пурнăça тытса тăрас тенĕ пирки кайран фронтра темиçе пин çын салтакĕсен юнĕпе тӳллес пулать.

Хăйĕн парти интересне çĕршывăн интересĕнчен маларах шутлама тăрăшакан ниепле партие те Америка общественноçĕ тӳсме пултараймасть,—тенĕ Уоллес.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ВИЛЬГЕЛЬМСХАФЕНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, Англи бомбардировщикĕсем Вильгельмсхафен çине вĕçсе пырса тапăннă. Çакăнпа пĕрлех Англи самолечĕсем Хĕвеланăç Германин ытти тĕрлĕ объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Пур самолетсем те хăйсен базисене таврăннă.

ЧАН КАЙ-ШИ АРĂМНЕ ЛОНДОНА ЧĔННИ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ çапла пĕлтернĕ: Англи правительстви генералиссимус Чан Кай-ши арăмне Англие килме чĕнчĕ, вăл çав чĕнĕве йышăнĕ тесе шутлать.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: ĕнер тăшман Кассерни ятлă сăртсем хушшинчи çулăн районĕнче çурçĕрелле тата çурçĕр-хĕвеланăçнелле чакса пынă.

Союзниксен бомбардировщикĕсем ĕнер Тунис хулин аэродромĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Çĕр çинче ларакан самолетсене тĕлех тивертнисене паллă тунă. Çав операцисенче тăшманăн 7 истребительне тата пĕр транспортнăй самолетне персе антарнă. Союзниксен авиацийĕ 6 самолет çухатнă.

Юр ирĕлессе кĕтмелле мар

КАЛИНИНО. («Чăваш Коммуни» корр.). Уйкас Явăшри Калинин ячĕпе тăракан колхозра çуракине хатĕрленесси япăх пулса пырать. Колхоз вăрлăхсене халĕ те сортласа пĕтермен. План тăрăх, колхозăн 40 центнер урпа вăрлăхĕ хатĕрлемелле. Ăна паян кунччен сортлама тытăнман. Çавăн пекех ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе те колхоз тимĕрçисем В. Леонтьевпа Г. Еремеев çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсен халь тата 12 плуг юсамалла. Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç кăмрăк çук пирки 4 кун хушши ытла чарăнса тăнă.

Вăйлă тырпул туса илесси агротехникăллă мероприятисене çине тăрса туса пынинчен килет. Анчах колхоз бригадирĕсем Герасимов, Скворцов, Ермолаева юлташсем çак пысăк ĕçе ăнланса илмен. Вырăнти удобренисене пухма панă заданисене пурнăçламан. Колхозри пĕрремĕш бригадăн (бригадирĕ Ермолаева) 53 гектар çинче юр тытмалла пулнă пулсан, халĕ пĕтĕмпе те 7 гектар çеç тытнă-ха. Çавăн пекех 10 центнер вырăнне 5 центнер кĕл, 9 центнер вырăнне 6 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Иккĕмĕш бригада та (бригадирĕ Скворцов) пĕр центнер та кĕл пуçтарман, фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлес задание тултарман. Бригада хĕллехи вăхăтра 1.560 лав тислĕк кăларас вырăнне 1.140 лава яхăн кăна хире турттарнă.

Колхоз председателĕ Казаков юлташ çуракине хатĕрленес ĕçе начар ертсе пырать. Колхозра кĕл пухма, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕсене пĕр вырăна пуçтарма майсем çителĕклĕ. Вĕсем: «ку ĕçе эпир çуркунне, юр ирĕлме пуçласан тăватпăр», тесе лăпланса пурăнаççĕ.

Лаша кӳлмелли хатĕрсем колхозра çителĕксĕр. Пĕтĕм хăмăт-ĕнерчĕксене колхозниксен килĕсем тăрăх салатса пĕтернĕ. Вĕсем çураки валли пачах çителĕксĕр.

Колхоз руководителĕсен, вăхăта сая ямасăр, халех çуракине хатĕрленсе çитмелле. Юр ирĕлессе кĕтсе пурăнас шухăш-кăмăлсене пĕтермелле.

Çуракине хатĕр

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Коммунист Т. Хасянов председатель пулса ĕçлекен „Мотор" колхоз членĕсем Çĕрпӳ районĕнчи „Чуваш. ЦИК" колхоз чĕнсе каланине йышăнса илсе Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле çуракине хатĕрленсе çитесси шĕн социализмлă ăмăртăва тухнăччĕ. Колхозниксем, колхозницăсем çуракине хатĕрленес ĕçре пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç, хăйсемпе ăмăртса ĕçлеме кӳршĕри „Красный воин" колхоз членĕсене чĕнчĕç.

Пĕтĕм совет халăхĕ хăйĕн геройла Хĕрлĕ Çарĕ 25 çул тултарнине паллă турĕ. Çак аслă куна „Мотор" колхоз членĕсем фронт ыйтнă пек ĕçлесе кĕтсе илчĕç. „Мотор" колхоз çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕ. Вăрлăхсем пĕтĕмĕшпех хатĕр, вĕсен шăтас пахалăхĕ 96—99,4 процент, пурте лайăх кондициллĕ. Агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене пурне те пурнăça кĕртнĕ. Уя 200 тонна тислĕк кăларнă (план 65 тонна), акмалли çĕр çине пĕтĕмĕшпех юр тытса хăварнă, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл тата минераллă удобренисем çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Колхоз тимĕрçи М. Потемкин юлташ çуракинче ĕçлеме 15 плуг, 26 сӳре, 4 сеялка тата 15 урапа юсаса лартрĕ. 25 лаша валли 33 хăмăт, çавăн чухлех ĕнерчĕкпе ытти таврашсем туса хатĕрленĕ. Пур лашасем те ĕçе тухма хатĕр. Кăçал ĕçе çĕнĕрен 4 тиха хутшăнаççĕ, вĕсене çӳреме вĕрентеççĕ. Лашасем валли фураж уйăрса хунă.

Колхоз правленийĕ çуракинче тумалли ĕçсен планне туса ăна колхозниксен пухăвĕнче çирĕплетнĕ. Тырă акакансене, сухалакансемпе сӳрелекенсене уйăрса çирĕплетнĕ.

Хĕллехи вăхăтпа туллин усă курса, колхозниксем халь çурт-йĕрсем тума йывăç турттараççĕ. Пурĕ 100 кубометр йывăç турттарса килнĕ. Колхоз кăçал çĕнĕрен сысна вити, çамрăк выльăхсене пăхса ӳстермелли çурт тата пахча-çимĕç хума подвал тума палăртнă.

„Мотор" колхоз членĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕç. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна вĕсем çуракине тухма хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илчĕç. Тăван çĕршывпа хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çар валли нумай тырпул туса парассишĕн фронтри боецсем пек тăрăшса ĕçлеççĕ.

В. Андреев.

Шкулсенчен çыраççĕ

Пушă вăхăтра колхоза çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ

КӲКЕÇ. Платкари пуçламĕш шкулта вĕренекенсем пушă вăхăтсенче яланах колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ. Çак кунсенче вĕсем „Красное знамя" колхоз валли 24 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç. Ку ĕçе учительсем Яковлевăпа Майкова юлташсем ертсе пычĕç. Вĕренекенсенчен уйрăмах Я. Матвеев, В. Шумилов, Р. Шильдякова, Л. Иванова т. ыт. юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Н. Мышкин.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли илемлĕ литература кĕнекисем пухаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри шкулсенче тата комсомол организацисенче фронтовиксем валли илемлĕ литература кĕнекисем пухас ĕçе организациленĕ. Районĕпе пĕтĕмпе 222 кĕнеке пухса фронта ăсатнă. Вĕсен шутĕнче М. Горький писателĕн „Амăшĕ" тата „Çынсем патĕнче", М. Шолоховăн „Лăпкă Дон", „Уçнă çерем", Пушкинăн „Дубровский" ятлă произведенийĕсем тата ытти вырăс классикĕсен кĕнекисем нумай.

Кĕнекесем пухас ĕçе Октябрьски вăтам шкулта вĕренекенсем активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинчех 27 кĕнеке пухрĕç.

А. Хатаевский.

Драмкружок фронта пулăшрĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Вăтам шкулти драмкружок вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа 8 спектакль лартнă. Укçалла лартнă спектакльсенче 5.518 тенкĕ пухăннă. Вăл укçаран 4.518 тенкине оборона фондне, 1000 тенкине драмкружок расхочĕсем валли панă. Драмкружок ĕçне Д. Харитонов аван йĕркелесе пырать.

Н. Кириллов.

РЕДАКЦИЕ КИЛНĔ ÇЫРУ

Фронтовиксен çемьисем çине чунсăрла пăхаççĕ

ВАРМАР. Чупайри «Дружба» колхоз правленийĕ (председателĕ И. Григорьев) фронтовиксен çемьисен ыйтăвĕсем çине чунсăрла пăхать.

Правленин февралĕн 4-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче колхозниксем колхозра пулăшу касси организацилеме сĕннĕ. Сăмахран, колхозница Христина Алексеева (красноармеец арăмĕ) хăйĕн ачисене пулăшма ыйтнă, анчах колхоз председателĕ Григорьев пĕр иккĕленсе тăмасăрах: «Эпĕ собес мар, пулăшма пултараймастăп», тесе ответленĕ. Кун пек тĕслĕхсем пирĕн колхозра татах пулнă.

Григорьев колхоз пурлăхне вăрланă. Вăрмар райсовет исполкомĕн председателĕ хушнипе ялсовет исполкомĕн председателĕ И. Константинов, колхозри ревизи комиссин председателĕ В. Тимофеев, фермăсен заведующийĕ М. Мясников тата колхозница П. Семенова унăн килне кайса тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн унăн килĕнче çур лав çапман сĕлĕ улăмĕ тупнă.

Правлени заседанине хупнă хыççăн, çав çĕрех правленин хупă заседанине ирттернĕ. Унта тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозницăна П. Семеновăна хăварнă та ун çинчен сӳтсе-явма тытăннă. Григорьев ăна «Чĕлхӳне касатпăр-ха санăнне, малашне çăварна нумай ан кар», тесе ятласа кӳрентернĕ. Правлени ларăвĕнче районри 2-мĕш участокри халăх судьи В. Милинский юлташ пулнă. Вăл Семенова колхозницăна хӳтĕлес вырăнне, колхоз председателĕ майлă пулса, ăна вăрçнă.

Григорьев малашне те колхоз председателĕнчех ĕçлĕ-ши?

В. Тимофеев.

Редакцирен: Çак материал пирки Райсовет исполкомĕ мерăсем йышăнасса кĕтетпĕр.

Районри хаçатсенчен

Фронтовиксен çемьисене пулăшса

Первомайски районра тăван çĕршыва сыхлама фронта кайнисен çемьисене вăрçă пуçланнăранпа 2.333.716 тенкĕ пособи панă.

Çавăн пекех колхозсем 1.359 центнер тырă тата ытти тĕрлĕ япаласем парса пулăшнă.

(«Коммунар»).

1943 çулшăн аш-какай, çу парса татрĕ

«Красный Маяк» колхозри (Комсомольски р.) Иван Андреевич Каткин юлташ государствăна 1943 çулшăн обязательнăй йĕркепе çу, аш-какай планне 100 процентпех тултарнă.

(«Октябрь ялавĕ»).

Пирĕн паттăр земляк Михаил Лукин

Кавалти (Вăрмар районĕ) вăтам шкулăн 9-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, вăл Мускава кайнă. Унта „Центросоюз" енĕпе конструкторсем хатĕрлекен курса вĕренме кĕнĕ. Ирсĕр тăшман пирĕн юратнă Тăван çĕршыв çине вăрăхурахла тапăнса кĕни çинчен пĕлсен, чăваш халăхĕн ывăлĕ комсомолец Михаил Лукин хăй ирĕкĕпе фронта каясси çинчен военкома заявлени панă.

Мĕнпур совет халăхĕн чĕрийĕ нимĕç захватчикĕсене тарăхнипе тулса çитнĕ. Кашниех ирсĕр тăшмана аркатса тăкас ĕмĕт-кăмăлпа пурăннă. Чăваш халăхĕн ывăлĕ ленинла-сталинла комсомолăн членĕ Михаил Лукин юлташ юнĕçенсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас шухăшпа çуннă. Комсомол билечĕ тăшмана пĕтерне çĕре хăвăртрах хутшăнма, фронта кайма чĕннĕн туйăннă. „Тантăшăмсем çапăçу хирĕнче, эсĕ пур... курсра вĕренетĕн. Вăрçă пĕтсен те вĕренĕн-ха..."—тенĕннех туйăннă. Михаил Лукин çавăнпа фронта кайма шутланă.

Военком килĕшӳ панă. Чăваш çамрăкĕн ĕмĕчĕ пурнăçланнă. Ленинла-сталинла комсомол вĕрентсе çитĕнтернипе Хĕрлĕ Çара юрăхлă çын пулнăшăн вăл савăннă!

Фронт. Унта вăл, хăйĕн сăмахĕсемпе каласан, малтанхи вăхăтра

рядовой красноармеец çеç пулнă. Анчах ӳсекен çамрăкшăн çакă вăл юлашки виçе мар-ха. Михаил Лукин командованин приказĕсене яланах лайăх пурнăçланă. Унăн пултарулăхĕпе хастарлăхне кура, командовани ăна политрук заместителĕ тунă.

Верея, Наро-Фоминск хулисене нимĕç захватчикĕсенчен тасатас тĕлĕшпе хаяр çапăçусем пынă. Лукин юлташ çав вăхăтра танксене хирĕç перекен оруди патĕнче взвод командирĕ пулса çапăçнă. Взвод тăшманăн наступлени тума хатĕрленнĕ подразделенине вирлĕн пырапыра çапнă. Çапăçу хирне çăткăн нимĕçсен виллисемпе витнĕ. Лукин юлташăн взвочĕ фашистсен 2 танкне, 3 автомашина, наблюдательнăй пункт тата тĕрлĕ калибрлă орудисем тытса илнĕ. Çав çапăçура хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Совет правительстви „За боевые заслуги" медальпе наградăланă.

Михаил Лукин—Вăрмар районĕнчи Пăвакассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхозран. Халĕ вăл госпитальре сывалнă хыççăн тăван ялакан кайма таврăннă. Унăн кăкăрĕ çинче çуталса тăракан медаль çине пăхса тăван амăшĕ Зинаида Михайловнă савăнать.

Хăвăртрах сываласчĕ те фронта тухса каясчĕ,—тет Лукин юлташ.— Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн приказне пурнăçлăпăр, тăшмана пĕтĕмпе пĕтерсе тăкиччченех çĕмĕрсе пырăпăр.

Учительница К. Григорьева.

Пĕлтерӳ

Мартăн 1-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) докладчиксемпе агитаторсем валли инструкциллĕ лекци пулать. Лекци теми: „Мартăн 8-мĕшĕ—пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен Коммунистла кунĕ".

Лекцие ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ Давтян юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автоуправлени тата „Транэнергокадры" Канашри автошкул шоферсен курспе вĕренме илет.

Вĕрентессине кăнтăрла та каçхине те вĕрентеççĕ. Вĕренме кĕмелли условисем çинчен автотранспорт конторисенче тата Канаш автошкулĕнче ыйтса пĕлмелле.

Заявленисене 1943 çулхи мартăн 15-мĕшĕччен илеççĕ.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 094 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 ф. б. 58. 42 п.